* * *

Çӳретĕп эпĕ Висла леш енче.
Кĕрхи вăрман чирленĕ пек сап-сарă.
Хĕвел çӳрерĕ пĕлĕт хушшинче.
Тухмарĕ уйăх. Çăлтăр курăнмарĕ.
Пырать татти-сыпписĕр ик эрне
Шуйттан, чуна çунтармăш сивĕ çумăр.
Çĕре лӳшкеттĕрех ахаль чухне!
Анчах та халĕ манăн шухăш йывăр.

Юратнă тусăм вилчĕ çапăçса,
Çĕре чипер чикме пулмарĕ ырлăх.
Тăпра чавсассăн анчĕ шыв куçса,
Ăçта кайсан та лăпăр-лапăр шурлăх.

Шывра çĕрсен те паттăр этеме
Киревсĕр мар. Ăна никам тиркемĕ.
Ӳстернĕ пурăнма та кĕрешме
Ăна тăпра хăвачĕ, шыв илемĕ.

Çиçсе вылянă унăн куçĕнче
Шывра çуралнă асамат кĕперĕ.
Эпир пурте тăпра сĕткенĕнчен,
Анчах тăпра пулассăм ман килмерĕ.

Нумай пурнасчĕ манăн çĕр çинче,
Пуласчĕ сак тулли ача-пăчаллă.
Çӳретăп эпĕ Висла леш енче.
Çанталăк кĕркунне йĕпе-сапаллă.

*1944*